Муниципальное бюджетное общеобразовательное учреждение

«Алманчиковская основная общеобразовательная школа»

Батыревского района Чувашской Республики

**РАБОЧАЯ ПРОГРАММА**
**по родному (чувашскому) языку (1-4 классы)**

**на уровне начального общего образования**

**(предметная область «Филология»)**

**Составители: Фомина Ирина Николаевна,** учитель высшей квалификационной категории

**Степанова Алина Николаевна,** учитель первой квалификационной категории

**Никитина Валентина Владимировна,** учитель первой квалификационной категории

**Косолапова Любовь Саввична,** учитель первой квалификационной категории

с. Алманчиково

**1.Харкамлăх, предметсен пĕрлĕхлĕ тата предметсен пайрам результачĕсем.**

**Харкамлăх результачĕсем**

**Вĕренекен çакна пĕлмелле.**

- тăван чĕлхене хаклама, хисеплеме хăнăхса пыни;
- кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи, вăл ыттисенчен уйрăлса тănине ăнланни;
- чĕлхепе кăсăкланма пуçлани, харпăр хăй пуплевне лайăхлатас кăм*ăл*-туйăм амаланни

**Пур предмета та вĕрентнĕ май кĕтекен результатсем:**

**Вĕренекен çакна пĕлмелле.**

- пулăмсене тарăнрах ăнланма вĕренсе пыни
- ăнлавсене уçăмлама, ушкăнлама хăнăхса пыни

Предметăн пулас результачĕсем

**Пĕлӳлĕх(познавательные) результачĕсем:**

- çырнă чух мĕнле лармаллине тата çыру хатĕрĕсемпе мĕнле усă курмаллине пĕлни;
- таврари япаласене, пулăмсене тĕпчес ăнтăлав аталанни;
- таврари япаласемпе пулăмсем çинчен мĕн пĕлнине системăлани: «Тăван çĕр-шыв» ăнлава уçăмлани. Вăл çуралнă вырăн, тăван ял, тавралăх, хăй пурăнакан республика тата çĕр-шыв (Раççей) пулнине ăнланни, унăн культури, мухтавлă çыннисем çинчен пĕлни; çут çанталăк законĕсем, япаласемпе пулăмсем пĕр-пĕринпе çыхăнса аталаннине курни;
- тавралăх енĕсене, япалан вырăнне кăтартма, тавралăхри вырăнне палăртма пĕлни;
- япаласен пĕрпеклĕхне, уйрăмлăхне, вĕсем мĕнпе уйрăлса тăнине курма, палăртма пултарайни;
- ачан тавракурăмĕ анлăланни, çут çанталăкри пулăмсем, çулталăк вăхăчĕсем, çемье, чĕр чунсем, ачасен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлни, тĕнче курăмĕ йĕркеленсе пыни;
- туйăм культури çивĕчленни, кирлĕ вăхăтра пулăшма, мĕн тумалла, мĕнле тумаллине тавçăра пуçлани;
-пысăк, пĕчĕк, тан уçлăха курни, логикăллă шайлаштарайни;
- вĕренӳ хатĕрĕсенче кирлĕ материала шыраса тупма пĕлни;
- вĕренӳ хатĕрĕсенче панă символсене, модельсене, схемăсене,паллăсене ăнланни;

**Йĕркелӳ-хаклав(регулятивные) результачĕсем:**

- тантăшĕсен тата харпăр хăй ĕçне тищкерейни тата пахалайни;
- тишкерӳ - пĕтĕçтерӳ ĕçне хăнăхни, пĕтĕмĕшлине пайсем çине уйăрма, пайĕсене пĕтĕçтерме пĕлни;
- тĕрĕс курма, япаласен уçлăхри вырăнне палăртма пултарни;
- хăйĕн ĕçне вĕрентекен, юлташĕсем хакланине йышăнни;
- вĕрентекен, класпа пĕрле палăртнă задачăна татса памалли тĕрлĕ майсем тупни;
- хăвăн шухăшна ăнлантарса парайни;
- йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;
- ĕç йĕркине, мĕн хыççăн мĕн тумаллине, мĕншĕн ун пек тумаллине тавçăрни;
- ĕçĕн кашни тапхăрне вĕрентекен пулăшнипе хак парса пырайни;
- харпăр хăй ĕçне планлама пĕлни.

**Хутшăну(коммуникативные) результачĕсем:**

- шухăша тĕрĕс те уçăмлă, çыхăнуллă каласа пама тăрăшни;
- текстпа ĕçлеме пĕлни, вулани çинчен çыхăнуллă тата уçăмлă каласа пама тăрăшни;
- ачан пуплевĕ, йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;
-пуплев культури аталанни: пĕр-пĕр япала, пулăм, ĕç çинчен çыхăнуллă, кирлĕ сăмахсемпе усă курса каласа пама пултарни; юлташпа, аслисемпе, ваттисемпе мĕн çинчен тата мĕнле сăмахсемпе усă курса калаçмаллине ăнкарни, кампа калаçнă чух, хăçан, мĕнле сăмахсемпе (сывлăх сунни, тав туни, сывпулашни) усă курмаллине тавçăрни;
- çывăх, хирĕçле, пĕр пĕлтерĕшлĕ, нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсене тĕрĕсрех, тарăнрах ăнланни, вĕсен ретĕнче кирлине суйлайни;
- сăмахсен куçăмлă пĕлтерĕшне ăнланни;

- чăваш чĕлхинче сăмахсен предложенире çирĕп йĕрке пуррине ăнланни, ăна пуплевре тытса пырайни;

- каласа парассин тĕрлĕ тĕсĕсене (калав, сăнлав, уйлав) пĕлни. Вĕсен тытăмĕпе уйрăмлăхĕсене курма, калавăн тĕрлĕ тĕсне йĕркелеме пултарайни;

- калав темине, тĕп шухăшне палăртайни;

- хутшăну пуплев\ (диалог) тытăмне, унти предложенисен хăй евĕрлĕхне (ытларах тулли мар предложенисем) пĕлни. Диалог шалашĕ пĕр темăна, пĕр тĕп шухăша пăхăнса тăнине ăнланни. Майĕпен хутшăну пуплевне тĕрлĕ пуплев ситуацийĕсенче усă курма пултарни;

- ушкăнпа ĕçлеме пĕлни;

- сăмах йышĕ пуянланни;

- çынсем тĕрлĕрен шухăшлама пултарнине ăнланни.

Ача пуплевĕнчи тĕп ĕç - хĕлсене( тăнлассине, калаçассине, вулассине, çырассине) аталантарса пынипе пĕрлех тăван чĕлхе вĕрентнĕ чух çак тĕллевсене пурнăçламалла:

Вĕрентекенсен çынлăх туйăмĕсене вăйлатмалла, пурнăçа юратма, ырра шанса тăма тата хăйсене те ырă кăмăллă, сăпайлă пулма хăнăхтармалла;

Ачасем таврари пурнăç, этемпе çут çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатмалла;

Ачасен çыхăнуллă тата сăнарлă шухăшлăвĕпе асне, асăмлас хевтине аталантармалла;

Вĕренӳ ĕç-хĕлне лайăхрах хăнăхтарса, унăн ăслайĕсене «алла илме» май туса памалла; вĕренӳ вăхăчĕпе перекетлĕ усă курма, харпăр хăй тĕллĕн ĕçлессин ансатрах мелĕсене чухлама вĕрентмелле;

Тăрăшуллă та тимлĕ вĕренме, пĕлӳпе пурнăç тĕслĕхĕсен çăл куçĕпе – кĕнекепе кăсăкланма хăнăхтармалла.

**Предметăн пайрам результачĕсем:**

**Вĕренекен çакна пĕлмелле:**

- ачасем алфавитри сас паллисене, вĕсен пĕлтерĕшĕсене, уçă тата хупă сасăсен уйрăмлăхĕсене, сăмахри уçă сасă çине пусăм ӳкни-ӳкменнине, сасăсем хытă тата çемçе пулнине, сăмахсене пĕр йĕркерен теприне мĕнле куçармаллине пĕлни;

- 35_40 сăмахлă текста каллиграфи тĕлĕшĕнчен тĕрĕс те таса, сас паллисене сиктерсе хăвармасăр, пăтраштармасăр пăхса çырни;

- 25_30 сăмахлă текста итленипе (диктант) çырма пĕлни;

- сăмаха сыпăклама, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене тĕрĕс куçарма;

- çемçе хупă сасăсене çырура тĕрĕс палăртма, вăрăм хупă сасăллă сăмахсене (программăра кăтартнисене) тĕрĕс çырни;

- çын ячĕпе хушаматне, ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юханшыв ячĕсене пысăк сас паллипе пуçласа çырма пултарни;

**Вĕренекенĕн çакна тума пултармалла:**

- сăмахсен сасă тытăмне тишкерме (вĕсене сыпăклама, уçă тата хупă сасăсене, сасăсемпе сас паллисен йĕркине тата хисепне палăртма) пĕлни;

- япалана, унăн ĕçне, паллине пĕлтерекен сăмахсене ыйтăвĕ тăрăх ушкăнлама-пултарни;

- предложенин тĕп членĕсене – подлежащипе сказуемăя – тупма пĕлни;

- ыйтусем тăрăх ансат предложени членĕсем хушшинчи çыхăнăва палăртма вĕренни;

- предложение пысăк сас паллирен пуçласа çырма, ун вĕçне, интонацие кура, пăнчă, ыйту е кăшкăру палли лартма пĕлни;

30_45 сăмахлă текст тăрăх ыйтусене хуравласа изложени çырма;

2_3 предложениллĕ текст тума пултарни.

## 2 класс

***Харкамлăх результачесем:***

— тăван чĕлхене хаклама, хисеплеме хăнăхса пыни;

— кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи пулнине, вăл ыттисенчен уйрăлса тăнине ăнланни;

— чĕлхепе кăсăкланма пуçлани, харпăр хăй пуплевне лайăхлатас кăмăл-туйăм амаланни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

— пулăмсене тарăнрах ăнланма вĕренсе пыни;

— ăнлавсене уçăмлама, ушкăнлама хăнăхса пыни;

— тишкерӳ-пĕтĕçтеру, танлаштару хăнăхăвĕсем çирĕпленсе пыни.

***Предметăн пайрам результачĕсем:***

— ачасем алфавитри сас паллисене, вĕсен пĕлтерĕшĕсене, уçă тата хупă сасăсен уйрăмлăхĕсене. Сăмахри уçă сасăçине пусăм ўкни-ўкменнине, сасăсем хытăтата çемçе пулнине, сăмахсене пĕр йĕркерен теприне мĕнле куçармаллине пĕлни;
— 35-40 сăмахлă текста каллиграфи тĕлĕшĕнчен тĕрĕс те таса, сас паллисене сиктерсе хăвармасăр, пăтраштармасăр пăхса çырма пултарни;
— 25—30 сăмахлă текста итленипе (диктант) çырма вĕренсе пыни;
— сăмаха сыпăклама, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене тĕрĕс куçарма, çемçе хупă сасăсене çырура тĕрĕс палăртма, вăрăм хупă сасăллă сăмахсене (программăра кăтартнисене) тĕрĕс çырни;
— çын ячĕпе хушаматне, ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк сас паллипе пуçласа çырма пултарни;
— сăмахсен сасă тытăмне тишкерме (вĕсене сыпăклама, уçă тата хупă сасăсене, сасăсемпе сас паллисен йĕркине тата хисепне палăртма) пĕлни;
— япалана, унăн ĕçне, паллине пĕлтерекен сăмахсене ыйтăвĕ тăрăх ушкăнлама пултарни;
— предложенин тĕп членĕсене – подлежащипе сказуемăя — тупма пĕлни;
— ыйтусем тăрăх ансат предложени членĕсем хушшинчи çыхăнăва палăртма веренни;
— предложение пысăк сас паллирен пуçласа çырма, ун вĕçне, интонацие кура, панчă, ыйту е кăшкăру палли лартма пĕлни;
— 30-45 сăмахлă текст тăрăх ыйтусене хуравласа изложени çырма; 2—3 предложениллĕ текст тума пултарни.

## 3 класс

***Харкамлăх результачĕсем:***
— ачасен тăван чĕлхене тĕплĕнрех вĕренес, харкамăн пуплев ĕç-хĕлĕсене аталантарас кăмăлĕ амаланни;
— тантăшĕсен тата харкам пуплевне сăнама, тĕрĕслеме вĕренсе пыни;
— тăван чĕлхе пуянлăхĕпе, илемĕпе киленме пуçлани.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***
— тĕрлĕ текста тишкерме, тӳрлетме вĕренсе пыни;
— пуплев культурин енĕсене тимлеме хăнăхса пыни;
— калура тата çьтрура пуплев тата хутшăну этикечĕн нормисене тытса пыма хăнăхса пыни;
— урокра тата тулашĕнче харпăр хăй ĕçне йĕркелеме вĕренсе пыни.

***Предметăн пайрам результачĕсем:***
— сăмахăн тĕп пайĕсем — унăн тымарĕпе аффиксĕсем; пуплев пайĕсем – япала ячĕ, глагол, паллă ячĕ; предложенин тĕп (подлежащи, сказуемăй) тата кĕçĕн членĕсем пулнине пĕлни;
— вĕреннĕ орфограммăсенчен тăракан 40-45 сăмахлă текста таса, тĕрĕс те илемлĕçырса илме, итленипе (диктант) çырма, пред-ложенисем вĕçĕнче кирлĕ чарăну (пăнчă, ыйту е кăшкăру) палли лартма пултарни;
— сăмахсен сасă тытăмне сăнама: сыпăксене уйăрма, уçă тата хупă сасăсене палăртма, уçă сасăçине пусăм ўкни-ўкменнине пĕлме, хупă сасă хытти-çемçине, янăравлă-янăравсăррине туйма, сăмахри сасăпа сас палли хисепне уяма хăнăхса пыни;
— сăмах тытăмне (тымарĕпе аффиксне) курма пултарни;
— пуплев пайĕсене (япала ячĕ, глагол, паллă ячĕ) палăртма, вĕсем мĕнле формăрине (япала ячĕсен хисепне, глаголсен вăхăчĕпе хисепне) чухлани;
— предложенири сăмахсен çыхăнăвне асăрхани, сăмах майлашăвĕсене уйăрни;
— предложени тытăмне (синтаксисне) ансат тишкерме (вăл калуллă, ыйтуллă е хиствлĕ, кăшкăруллă е кăшкăрусăр пулнине палăртма, унăн тĕп тата кĕçĕн членесене, весем хушшинчи çыхăнăва ыйту лартса тупма) пĕлни;
— ушкăнпа тунă е хатĕр планпа усă курса 55—65 сăмахлă изложени çырма вĕренсе çитни.

## 4 класс

***Харкамлăх результачĕсем:***
- таса, тĕрĕс, вырăнлă пуплев çыннăн сапăрлăх тата пĕтĕмĕшле аталанăвĕн палăрăмĕ пулнине ăнланни;
- чĕлхепе тирпейлĕ, тĕрĕс усă курма вĕренес кăмăлĕсем çирĕпленни;
- хутшăну культурин правилисемпе килĕшӳллĕн вăхăтра тав тума, каçару ыйтма, саламлама,

вашават сăмах хушма, япала ыйтса илме, чĕнĕве палăртма пĕлни;

- чĕлхе харкам ăславлă пултарулăхне, шухăш вĕçевне палăртмалли, аталантармалли хатĕр пулнине ăнланни.

*Предметсен пĕрлĕхлĕ результач\сем:*

- ч\лхе тĕп хутшăну хатĕрĕ, наци культурин единици, вĕренӳ тата аталану хатĕрĕ пулнине ăса хуни;
- чĕлхен тĕрл\ çăл куçсенче кирлĕ тивĕçлĕ информаци тутма, ăнăçлă усă курма хăнăхса пыни;
- чĕлхе хатĕрĕсемпе хутшăну тата вĕренӳ задачисемпе шайлашуллă тивĕçлĕ усă курма вĕренсе пыни.

*Предметăн пайрам результачĕсем:*

- вĕреннĕ пуплев пайĕсем, вĕсен паллисем, предложенин пĕр йышши членĕсем çинчен çирĕп пĕлни;
- вĕреннĕ орфограммăсенчен тăракан 55-60 сăмахлă текста йăнăшсăр, таса та илемлĕ çырса илме, диктант çырма пултарни;
- пĕр йышши членлă предложенире (вĕреннĕ тĕслĕхсем) чарăну паллисем лартма вĕренни;
- сăмахăн сасăпа сас палли тытăмне тишкерме, тымарĕпе аффиксĕсене чупма хăнăхни;
- япала ячĕсен, сăпат ылмашĕсен падежĕпе хисепне, глаголсен хисепне, сăпачĕпе вăхăтне палăртма пултарни;
- предложенин ансат синтаксис тытăмне чухлама: вăл тĕллевпе интонаци тĕлĕшĕнчен мĕнлине калама, унăн тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсене тупма, ыйтусем тăрăх вĕсен çыхăнăвне тата пĕр йышши членсене асăрхама хăнăхса пыни;
- харпăр хăй тĕллĕн тунă планпа усă курса 80-90 сăмахлă текст гăрăх изложени çырма, пурнăçра пулни-иртни, экскурсире курни, сăнани çинчен çыхăнуллă пĕчĕк калав йĕркелеме (сочинени çырма) вĕренсе пыни.

## 2.Предметăн шалашĕ (Содержанийĕ)

Тин çеç шкулта вĕренме пуçланă ачасене хутла вĕрентесси кăткăс ĕç. Сас паллисене ăса хывма, сыпăнтарса вулама, вĕсене çырма хăнăхтарма, çавăнтах вулама-çырма вĕрентесси 1-мĕш класра вĕренӳ çулĕ тăршшĕпе пулса пырать. Вулама-çырма вĕрентмелли уроксем эрнере 4 пулмалла. Еç ăнăçлăрах пултăр тесе меслетçĕсем ăна тапхăрăн йĕркелеме сĕнеççĕ: букварь умĕнхи тапхăр, букварь тата букварь хыççăнхи тапхăрсем.

**Хатĕрлев тапхăрĕ**

Хатĕрлев тапхăрĕ икĕ эрне тăсăлать. Ку тапхăра ытларах тăсни вулама-çырма вĕрентес вăхăта кĕскетни пулать пулин те, ачасем шкулта хутла вĕренме мĕн таран хатĕррине шута илсе учитель хатĕрлеве ытларах вăхăт уйăрма та пултарать. Ку тапхăрта малти вырăнта пĕлӳ илесси мар, хăнăхусем туянасси пулмалла.

**Сас паллисем вĕреннĕ тапхăр**

Ку тапхăр çав тери яваплă: ачасен вулас-çырас ăсталăх никĕсĕ хывăнать. Сак ĕç çĕнĕлĕхĕпе вĕсен вĕренӳри пулас çитĕнĕвĕсем тачă çыхăннă.

Эпир вулама-çырма вĕрентме усă курма сĕнекен меслете талккишлĕ анализ-синтез меслечĕ теме пулать. Вăл XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчех сарăлса çирĕпленнĕ сасă анализ-синтез меслечĕн варианчĕ.

Тапхăр сентябрь çурринчен пуçласа апрель вĕçĕ таран тăсăлать.

**Сас паллисем вĕреннĕ хыççăнхи тапхăр**

Ку тапхăр тăван чĕлхери пур тĕп сасăсемпе, вĕсен сас палийĕсемпе паллашнă хыççăн пуçланать те вĕренӳ çулĕ вĕçлениччен тăсăлать. Тапхăрăн тĕп тĕллевĕ _ ку таранччен харпăрланă ăслай-хăнăхусене, ăнланусене çирĕплетесси, пуплев ĕç-хĕлĕн пур енĕсене те малалла аталантарасси, çивĕчлетесси.

**Сасăсемпе сас паллисем.**

Вĕсем хушшинчи уйрăмлăхсем çинчен ачасем 1-2 классенчех пĕлеççĕ. Сасăсем усă тата хупă, хытă тата çемçе, янăравлă тата янăравсăр пулнине палăртма вĕренеççĕ, сыпăк, пусăм ăнлавсемпе паллашаççĕ, схемăпа усă курса сăмахсен сасăпа сас пали тытăмне тишкереççĕ. Вулама-çырма вĕренмелли кашни урокрах ачасем пуплевĕн ансаттĕслĕхĕсене пăхса тухаççĕ, çавна май фонетика терминĕсемпе усă курма та хăнăхаççĕ. 2 класра фонетикăпа графика тишкерĕвĕ тĕрĕс çырма вĕрентессипе тата пуплев кăлтăкĕсене юсассипе çыхăнать.

3-4 классенче ачасен çак пĕлĕвĕсемпе ăслайĕсем, хăнăхăвĕсем малалла аталанаççĕ. Вĕсен пуплеве тăнлас-итлес сисĕмĕ çивĕчленет, сăмахăн сасăпа сас пали тытăмне чухласси

лайăхланать. Ку тапхăрта фонетикăпа графика тишкерĕвĕпе усă курнин тĕп тĕллевĕсем-йăнăшсăр çырса илес, илтнипе çырас, çырнине тĕрĕслес ăслайсене вĕрентесси, тĕрĕс çырас хăнăхусене лайăхлатасси.

Тĕпрен илсен, фонетикăпа графика тишкерĕвне вĕрентнин тĕллевĕсем 1 класра та , 2-4 классенче те пĕрешкел: ачасем сасăсене ăнланса уйăрма, вĕсене тăван çырулăхра йышăннă пек палăртма вĕренмелле. 1 класс пĕтернĕ тĕле вĕсен çакна пĕлмелле: каланипе çырни хушшинче турĕ шайлашу çук, сăмахри сасăсемпе сас паллисен йышĕ пур чухне те пĕр пек маар, чылай сас паллин темиçе пĕлтерĕш пулать (сăмахран, хытă хупă сасса та, çемçине те пĕр пекех палăртатпăр: ут-ут, сăн-сĕн), хăш-пĕалли икĕ сасса палăртать(яка, юрă, ешчĕк), тепĕр чухне пĕр сассах икĕ сас пали çырса палăртатпăр (кукăль, мăкăнь, вулать).

2 класра вырăс чĕлхинчен кĕнĕ хăш-пĕр сăмахсене калассипе, çырассипе паллаштарма пуçлатпăр. Кунсăр пуçне ачасем чăн чăваш сăмахĕсенчи вăрăмланнă сасса илтме, ансат тĕслĕхсенче ăна икĕ пĕр пек сас пали çырса палăртма вĕренеççĕ, илтнипе (диктант) Сырма хăнăхаççĕ.

3-4 классенче тĕрлĕрен хăнăхтару пурнăçланă май вĕренекенсем тĕс çырассин йывăрлăхĕсене асăрхама-туйма, орфографин чылай правилипе усă курма пуçлаççĕ. Çапла вара, сăмахăн сасăпа сыпăк тытăмне тишкерес хăнăхусене лайăхлатса пырса, вĕсене сăмахăн пĕлтерĕшлĕ пайĕсене асăрхамалли хăнăхтарусемпе çыхăнтарса ачасен тĕрĕç çырас мехелне вăйлатсах пыртпăр. Унсăр пуçне фонетикăпа графика тишкерĕвĕ ачасен пуплев культурине лайăхлатассипе тачă çхăнмалла.

**Сăмах.**

Пуçламăш шкулта вĕренекенсен сăмах йышне пуянлатассине тăвать çулĕпех тĕп тĕллевсен пĕри тесе шутламалла. Ку тĕллеве пуплеве пур енлĕн аталантармалли уроксенче тĕрлĕ хăнăхтару тутарса пурнăçламалла. Чĕлхемĕрти сăмахсем вăл е ку япалана, пулăма, вĕсен ĕçне т.ыт.те.палăртнине, пĕлтерĕшĕпе çывăх е хире-хирĕç пулнине, предложенире, текстра сăмахпа темиçе пĕлтерĕшпе усă курма май пуррине ачасем чĕлхе теорине тӳррĕн вĕренсе мар, тĕрлĕ хăнăхтару, сăнавсем тунă май куç кĕрет курмалла. Вĕсем шухăша тĕрĕсрех палăртакан сăмахсене суйлама вĕренсе пыраççĕ, сăмах йышĕ пуянланса пырать, унпа усă курасси лайăхланать.

2 класра сăмах тытăмĕпе паллаштарма пăхнă. Анчах ку терминсемпе паллаштаричченех сăмахсем пĕлтерĕшлĕ пайсенчен тăнине асăрхама пулăшакан, вăл е ку пĕлтерĕшлĕ пай пуррине кура сăмахăн пĕлтерĕшне тавçăрма вĕрентекен хăнăхтарусемпе усă курмалла. Çакă ачасен сăмах йышне пуянлатас ĕçре пысăк вырăн йышăнмалла.

3 класра сăмах тытăмне туллинрех вĕренме палăртнă. Вулав тата çыру хăнăхтарăвĕсем пурнăçланă май вĕренекенсем ансат тĕслĕхсенче сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан аффикссене асăрхама пуçлаççĕ, çапла вара вĕсем сăмахпа сăмахăн форми хушшинчи уйрăмлăха курма хăнăхаççĕ. Сăмах тытăмне тишкерме хăнăхни ăна мĕнле çырмаллине тавçăрма, çырнине тĕрĕсленĕ чух çак ăслайпа усă курма май парать. Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенче б, г, д, ж, з, ё, о, ц, щ сас паллисем çыратпăр, икĕ уçă сасă вăрăммăн илтĕннĕ чух та ăна час-часах вырăс чĕлхинчи евĕр пĕр сас паллипех паллă тăватпăр (парта, Саша, математика), пуçламăш формăра сăмах вĕçĕнчи (ă) сасса а е я çырса палăртатпăр (Нина, Галя).

Сăмахсене пĕлтерĕшĕ енчен ушкăнласси-тишкересси ерипенех вĕсен улшăну мелĕсене сăнассипе çыхăнса каять. Пуçламăш классенче ачасем пилĕк тĕп пуплев пайне уйăрма вĕренеççĕ: япала ячĕ, глагол, паллă ячĕ, хисеп ячĕ, ылмаш (местоимени). Пуплев пайĕсене уйăрмалли мелсемпе вĕсем пуплев пайĕсен терминĕсемпе паллашиччен чылай малтан паллашма тытăнаççĕ.

Программăра панă пуплев пайĕсене вĕренекенсем лексика пĕлтерĕшне, ыйтăвĕсене тата улшăну мелĕсене кура уйăрма хăнăхмалла. Ку тĕллеве пурнăçласси виçĕ тапхăра тăсăлать. 2 класра вĕренекенсем япалана, ĕçе, вĕсен паллисене пĕлтерекен сăмахсен ыйтăвĕсене калама хăнăхаççĕ, сăмахсене вĕсем мĕнле ыйтурине кура ушкăнлама тытăнаççĕ. 2 класра вĕсем япала ячĕ, глагол, паллă ячĕ, ылмаш терминсемпе усă курма хăнăхмалла. Ылмаш тесе ку класра сăпат ылмашне калаççĕ. Хыç сăмахсемпе союзсем çинчен ятарласа вĕренмеççĕ, анчах та вĕсем уйрăм сăмахсем пулнине туйма, вĕсене уйрăм çрма хăнăхтарса пымалла.

3 класра вĕренекенсене япала ячĕсем улшăннине, вĕсем пĕрреллĕ тата нумайлă хисепсенче пулнине, ытти сăмахсемпе çыхăннă чух тĕрлĕ аффикс йышăнма пултарнине тĕслĕхсемпе кăтартса памалла. Укĕм (падеж) терминпа паллаштармалла маар, апла пулин те ачасем укĕм

аффиксĕсем йышăннă япала ячĕсен ыйтăвĕсене лартма вĕренсе ҫитмелле. Еҫ-хĕлсене, вĕсем хăш вăхăтрине, паллă ячĕсене тĕĕ хăнăхтару тунă чух пĕлтерешпе ыйтăвне кура палăртма хăнăхмалла. Шут хисеп ячĕсен туллии тата кĕске формисене тĕрĕс ҫырма хăнăхтармалла, ку пуплев пайĕн кĕске формисене япала ячĕсемпе ҫыхăнтарма, вĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентсе пымалла.

4 класра маларах вĕреннĕ пуплев пайĕсемпе паллаштарма, япала ячĕсем мĕнле укĕмрине чухлама, терминпа усă курма хăнăхтармалла. Сăпатланă май сăпат формисемпе пĕрреллĕ тата нумайлă хисепсенче тĕрĕс усă курма, вĕсене тĕрĕс калама тата ҫырма вĕрентмелле. Тĕрлĕ укĕмри япала ячĕсене сăпат ылсашĕпе ылмаштарнине сăнаттарса ку мелпе пуплевре усă курма хистемелле.

Паллă ячĕсем ҫинчен те 4 класра вĕренекенсене ҫĕĕ пĕлу памалла. Уйрăмаъх вăйлă степеньри ем-ешĕл, сап-сарă, кăн-кăвак йышши паллă ячĕсене тĕрĕс ҫырассине тимлемелле.

Грамматика формисем.

Пуплев пайĕсем пирки ҫулерех каланисĕр пуҫне кашни класрах уйрăмах тимлемелли грамматика формисен шутĕнче- япала ячĕсен камăнлăхне (сăпатна) палăртасси, пулăшу пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсен тăтăшрах тĕл пулакан укĕм формисем.

**Предложени.**

Кĕҫĕн классенче вĕренекенсен: 10 предложени пуплевĕн тĕллевне кура калуллă, ыйтуллă, е хистевлĕ (хушуллă) пулнине, ăна мĕнле каланине кура – кăшкăруллă е кăшкăрусăр пулни ҫинчен; 2) предложении членĕсем ҫичен; 3) предложенири сăмахсен ҫыхăнăвĕ ҫичен; 4) предложени сăмах майлашăвĕсенчен тăни ҫинчен пĕлмелле. Ҫак ăнлавсемпе ачасене 4 ҫул хушшинче ерипен паллаштарса ҫитермелле.

1 класра ачасем предложение пуплевре асăрхама, ăна сăмахран уйăрма, ăна ҫырма, пысăк сас паллинчен пуҫлама, вĕҫĕнче пăнчă лартма вĕренеҫҫĕ.

2 класра предложении вĕҫĕнче, пăнчăсăр пуҫне, ыйту е кăшкăру пали лартассипе паллашаҫҫĕ, уйрăм сăмахсене палăртса калама, предложении вĕҫĕнчи паллăпа тивĕҫуллĕ интонации тума хăнăхаҫҫĕ.

3 класра вĕренекенсем предложении пуплев тĕллевне кура калуллă, ыйтуллă, хистевлĕ, интонацине кура – кăшкăруллă е кăшкăрусăр пулни ҫинчен пĕлмелле, предложенин ҫак тĕсĕсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма хăнăхмалла.

4 класра ачасем пĕр йышши членлă предложенисемпе паллашаҫҫĕ. Ку предложенисене тĕрĕс интонаципе калама, вĕсемпе калаҫура тата ҫырура усă курма, пĕр йышши членсене ҫырура хуреллĕ пăнчăпа уйăрма вĕренмелле.

Предложени членĕсемпе паллашасси 2 класран пуҫланать. Ачасем кам е мĕн ҫинчен тата мĕн каланине палăртакан сăмахсене тупма вĕренеҫҫĕ. 3 класра кĕҫĕн членсем терминпа усă курма тытăнаҫҫĕ.

Тĕрĕс ҫырма вĕрентесси кулленхи словарь ĕҫĕпе, фонетика, морфологи тата синтаксис хăнăхтарăвĕсемпе тачă ҫыхăнмалла.

Ҫыхăнуллă пуплев.

Кĕҫĕн ҫулхи ачасем малашне мĕнле вĕренсе пырасси, ăс-тăн илесси пуплевпе шухăшлав аталанăвĕсенчен килет. Ҫавна кура ҫыхăнуллă пуплев хăнăхтарăвĕсем кашни урокрах тĕп вырăнта пулмалла. Вĕсене текста вулассипе, тăнлассипе ҫыхăнтармалла, вĕсемпе пĕрлех текст тăвасси те, ăна ҫрасси те кашни класрах тивĕҫлĕ вырăн йышăнмалла.

Кĕҫĕн классенче вĕренекенсен ҫхăнуллă пуплевне аталантарасси, пĕтĕмĕшле илсен, ҫыхăнуллă текст тума вĕрентессипе пĕр килет. Вуланă е итленĕ калав, выляса кăтартнă диалог-ачасемшĕн ҫавăн евĕр текст тумалли тĕслĕхсем.

Ҫыхăнуллă пуплев хăнăхтарăвĕсене вулав урокĕсенче те, чĕлхе урокĕсенче те ирттермелле, вĕсене сăмах вĕҫҫĕн каласа та, ҫырса та пурнăҫламалла. Чĕлхе урокĕсенче, тĕпрен илсен, изложенисемпе сочиненисем, вулав урокĕсенче вара сăмах вĕҫҫĕн тумалли ĕҫсем ытларах сĕнмелле.

Ачасене текст ăнлавпа паллаштармалла, текстăн тытăмне сăнаттармалла, ансат текстсем тума вĕрентмелле. Ҫак ĕҫре тĕрлĕ мелпе, курăм хатĕрĕсемпе анлăн усă курмалла.

Ăславлă (творчествăллă) ҫыру урокĕсем.

Программăри тăван чĕлхе курсĕнче ятарласа ăславлă ҫыру урокĕсем палăртнă. Вĕсене 2 класран пуҫласа икĕ эрнере пĕрре ирттермелле.

Çыру урокĕсене тĕллевлĕ те тухăçлă ирттерес тесен кашни вĕрену чĕрĕкĕнче миçе изложенипе сочинени ирттермеллине, вĕсенчен хăшĕсем сăмах вĕççĕн тата çырса пурнăçламаллисем пулмаллине, текст тума вĕренессин хăш йывăрлăхĕсемпе çыхăнмаллине, тăван чĕлхе ытти уроксемпе мĕнле шайлашмаллине малтанах палăртса хумалла.

Вуланине каласа пама, изложении çырма хăхни ачасене харпăр шухăшне, сăнланине çыхăнуллăн çырса палăртма хатĕрлет.

Ăслав çыру урокĕсем чĕлхе урокĕсемпе тачă çыхăнса тăмалла.

Сочинени темисене палăртнă чух ачасем класра мĕн вуланине, курни-илтнине, вĕрентӳçĕпе пĕрле ӳкерчĕксем пăхнине шута илмелле. Тема сĕннĕ чух вĕренекенсен ӳсĕмне, ăнланăвĕпе шухăш-ĕмĕтне шута илмесен вĕсем ĕçе ăнăçлă пурнăçлаймаççĕ: сочинени чухăн шухăшлă, тытăмĕпе кăнттам, чĕлхипе начар пулса тухать. Сочинени темине ачасен усăллă ĕçĕсемпе çыхăнтарсан аван.

Пуçламăш шкулти изложенисемпе сочиненисем ытларах калуллисем пулмалла. Изложенипе сочинени калăпăшĕ пуçламăш классенче пысăк пулмалла мар. Вĕсене тӳрех тасан çыртармалла, икĕ хут çыртарса пĕр урокран ытла тăстармалла мар. Пĕчĕкрех ĕçсене вулав тата чĕлхе урокĕсенче ирттерме е класра лайăх хатĕрленсе киле пама та юрать.

Çырма вĕрентесси. Тĕрĕс те илемлĕ çырасси.

Пуçламăш классенче тăван чĕлхепе тĕрĕс те илемлĕ çырма вĕрентес ĕç нумай енлĕн пулса пырать. Тĕрĕс, таса, илемлĕ çырма вĕренччĕр тесен ачасен алă хăнăхăвĕпе куç виçине куллен лайăхлатма тăрăшмалла. Çырăва вĕрентнĕ май сасса сас паллипе палăртма, сас паллине, сăмаха, предложение çăмăллăн вулама-çырма, вĕсене кĕнекерен е класс хăми çинчен çырса илме, çырнине тĕрĕслеме, йăнăшсене тӳрлетме хăнăхтармалла.

Таса та илемлĕ çырма вĕрентме программăра ятарлă уроксем палăртман. Ку ĕçе тăван чĕлхе урокĕсенче куллен туса пымалла. 1 класра çыру хăнăхтарăвĕсене «Çыру тетрачĕпе» усă курса йĕркелемелле.

Таса çырмалли хăнăхтарусене 2-4 классенче урокри грамматика тата орфографии материалĕпе çыхăнтарма тăрăшмалла. Пуçламăш шкулта вĕренекен ачан çырăвĕ тирпейлĕ, вулама меллĕ, тĕрĕс пулмалла. Таса та илемлĕ çырма вĕрентни тирпейлĕ пулма, кирек мĕнле ĕçе те тӳрĕ кăмăлпа, тăрăшуллă тума хăнăхтарать.

## 3.Чăваш чĕлхи урокĕсен тематикăллă планĕ

1 класс

| №п/п | Урок теми | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Умĕнхи тапхăрти уроксем | 12 |
| 2 | Вулама-çырма вĕренмелли тапхăр | 86 |
| 3 | Вулама-çырма вĕрентнĕ хыççăнхи тапхăр | 34 |
| | | 132 |

2 класс

| №п/п | Урок теми | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | 1-мĕш класра вĕреннине аса илни | 4 |
| 2 | Сасă тата сас палли | 28 |
| 3 | Сăмах. Япала ячĕ. | 19 |
| 4 | Глагол. (Ĕçе пĕлтерекен сгмахсем) | 18 |
| 5 | Паллă ячĕ. Япала паллине пĕлтерекен сгмахсем | 12 |
| 6 | Предложени | 13 |
| 7 | Вĕреннине пĕтĕмлетни | 8 |
| | | 102 |

3 класс

| №п/п | Урок теми | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Пĕрремĕшпе иккĕмĕш классенче вĕреннине аса илесси | 6 |
| 2 | Сасă. Сас  палли | 21 |
| 3 | Предложени | 20 |
| 4 | Сăмах | 13 |
| 5 | Пуплев пайĕсем. Япала ячĕ | 10 |
| 6 | Глагол | 18 |
| 7 | Паллă  ячĕ | 8 |
| 8 | Виççĕмĕш класра вĕреннине аса илсе çирĕплетесси | 6 |
| | | 102 |

4 класс

| №п/п | Урок теми | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Вĕреннине аса илни | 6 |
| 2 | Сăмах тытăмĕ тата пулавĕ | 16 |
| 3 | Текст | 7 |
| 4 | Предложенин пĕр йышши членĕсем | 12 |
| 5 | Япала ячĕ | 14 |
| 6 | Паллă ячĕ | 9 |
| 7 | Хисеп ячĕ | 4 |
| 8 | Местоимени | 4 |
| 9 | Глагол | 22 |
| 10 | Вĕрену çулĕнче аса хывнине аса илесси | 8 |
| | | 102 |